«Çирĕплететĕп»
район администрацийĕн
пуçлăхĕн пĕрремĕш
çумĕ – вĕренӳпе
çамрăксен политикин
пайĕн ертӳçи

_______________Л.В. Левый
«____»_______________2020 ç.

**«Г.Л. Енейкинан « Чун йыхравĕ» кĕнекинчи сăвăсемпе юптарусене илемлĕ вуласси» регионсен шайĕнчи инçет видеоконкурсăн положенийĕ**

1. Тĕп тĕллевĕсем

Шкул ачисене Г.Л.Енейкина сăввисемпе, юптарăвĕсемпе паллашма май туса парас, ачасен вулав пултарулăхне ӳстерес, сăвă вулас ăсталăхне аталантарас тĕллевпе йĕркеленĕ.

2. Инçет видеоконкурсăн йĕркелӳçисем

Елчĕк район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕ, районти тĕп библиотека, Патреккелти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Г.Л.Енейкина.

3.Хутшăнакансем

Конкурса кирек кам та хутшăнма пултарать.

4. Видеоконкурса ирттермелли мелсемпе условисем

Инçет видеоконкурс çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче пуçланать, авăн уйăхĕн 8-мĕшĕнче вĕçленет. Çак вăхăтран каярах ярса панă ĕçсене йышăнмаççĕ, пăхса тухмаççĕ. Сăвă е юптару вуланă видеороликсене Елчĕкри тĕп библиотекăна çак электронлă адреспа ярса памалла yaltch_cbs@cap.ru.

Пĕтĕмлетĕвне Г.Л. Енейкинан «Чун йыхравĕ» кĕнекине хакланă вăхăтра тăвĕç, çĕнтерӳçĕсемпе призерсене Хисеп хучĕсем парса чыслĕç.

Конкурса хутшăнакансен видеофайл ăшне хăйсем пăхмасăр сăвă е юптару вуланă видеороликпа заявка тăратмалла, унта хушамачĕпе ячĕ, хăш çулта çурални, класс, шкул е организации ячĕ ( ача сачĕсене çӳрекенсемпе шкул ачисемшĕн - педагогăн хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ) пулмалла.

## 5. Номинацисем

1. «Г,Л.Енейкинан «Чун йыхравĕ» кĕнекинчи сăвва чи лайăх вулакан».
2. «Г,Л.Енейкинан «Чун йыхравĕ» кĕнекинчи юптарăва чи лайăх вулакан».

## 6. Ӳсĕм тапхăрĕсен категорийĕсем

1. Ача сачĕсене çӳрекенсем.
2. 1-5-мĕш классем.
3. 6-9-мĕш классем.
4. 10-11-мĕш классем
5. Аслăрах çулхисем.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 8(927) 857 98 81 Енейкина Галина Леонидовна; 8(905)341 47 06 Сайкина Светлана Николаевна; 8 83549)2-51-34; 8(83549)2-50-67 тĕп библиотеа.